

# Мĕтри Юман

## (Çуралнăранпа 130 çул çитнĕ май шухăшланисенчен)

*Ку улăп пек ĕçлевçĕ – чат тӳре,*
*Çыравçă, идеолог та политик...*
*Ун метеорĕ, çăлтăрĕ, боличĕ*
*Йĕрсем хăварнă пирĕн тӳпере.*

*(Элли Илле, Сонет, 2002)*

Халăхăмăрăн паттăр та ăслă çыннисем пайтах. Вĕсен ретĕнче, чăваш халăхĕн çĕр-çĕр паллă ывăлĕ хушинче Мĕтри Юман – пĕртен-пĕррех уçлăх "боличĕ, вичкĕн революционер, талантлă çыравçă, ăслă тĕпчевçĕ, историк, экономист, хăюллă кĕрешӳçĕ, политик. Вăл чăваш халăхне хӳтĕлесе Лев Толстойпа, Яков Свердловпа, Серго Орджоникидзепе, Надежда Крупскаяпа, Анатолий Луначарскипе, Иосиф Сталинпа темиçе хут тĕл пулса куçа-куçăн калаçнă, çырусем çырнă. Максим Горький Мускаври Малая Бронная урамĕнче ун хваттерне кĕре-кĕре тухнă. Вăл вăхăтра чăвашсенчен тата кам çав шайра, влаçăн тата ăс-хакăлăн чи çӳлти пусăмĕнче çаврăнма пултарни-не эпĕ пĕлместĕп.

Мĕтри Юман (Петров Дмитрий Петрович, 13, юпа, 1985 – 18, нарăс,1939, чăваш энциклопедийĕнче "Петров" хушаматпа кăтартнă), Тутарстанри Пӳркел ялĕнче чухăн кил-йышра çуралса ӳснĕ. Ял çыннисем хăйсен ентеш-çыравçисемпе Мĕтри Юманпа, Иван Юркинпа, Осип Романовпа, Владимир Ухлипе, Константин Петровпа тивĕçли-пе мăнаçланаççĕ. Çыравçă юбилейĕсене тăхăрьялсем халиччен чыслă ирттерсе пычĕç. Пӳркелти Иван Юркин çуртĕнче тăван тав-ралăх музейĕ ĕçлет. Унта Юман стендне йĕркеленĕ, çурт çине асă-ну хăми çапнă. Ялта çулсеренех "Юман вулавĕсем" ирттереççĕ. Вăтам шкул Мĕтри Юман пултарулăхне 9-мĕш класра туллин вĕрентет, программăна кĕртнĕ "Пӳлĕх йăмри" калавпа кăна çырлахса тăмасть. Тăхăр ял таврапĕлӳçисем халичченех паллă пулнă мĕнтелсем тав-ра çаврănса тăма юратмаççĕ – çĕннине тупма ăнтăлаççĕ. Шыраççĕ

ШĂПА

те – тупаççĕ, кĕнекесемпе журналсенче тата Хусанта тухса тăракан "Сувар" хаçатра пичетлеççĕ. Ку енĕпе музей пысăк ĕç тăвать.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех халăхсен 1905-1907 çулсенчи Пĕрремĕш пăлхавăрне хастар хутшăнма пуçланă Юман Кăнна Кушкинчи шкулта ĕçленĕ чухне таврари ял-ял тăрăх çӳресе халăх пухăвĕсен приговорĕсене нумай çырнă (вĕсен икĕ копине мана Элшелĕнчи паллă таврапĕлӳçĕ Николай Юнгеров парнеленĕччĕ, анчах вĕсем Мĕтри Юманăн 1997 çулта кăларнă кĕнекене кĕреймесĕр юлчĕç). Халĕ ширав ĕçне пӳркелсенчен халăх академикĕ Анатолий Малышев, таврапĕлӳçĕ-педагог Михаил Вериялов малалла тăсаççĕ.

Шырамалли питех те нумай. Пĕлнĕ япалисене те тупаймастпăр. Икĕ томпа кăларма хатĕрленĕ "Тăвалла сукмакпа" роман алçырăвĕ çук, повеçĕсем, киносценарийĕсем, тĕпчевĕсем тупăнмаççĕ. Теçетке ытла журналта (вырăсла, туркменла, французла, чăвашла) пичетленнĕ тĕрленчĕкĕсемпе хăтавĕсене ку таранччен те пухса сăнаман.

Чăваш халăхĕн XX ĕмĕрти Чĕрĕлĕвне Мĕтри Юман вĕрентĕвĕнчен уйăрса пăхма май çук. Анчах ун ĕçне-хĕлне тăршшипех "националист" тесе хуратса, вараласа тăчĕç. И.Кузнецовпа А.Изоркин Юман Мĕтрийĕ пирки наци ыйтăвĕсемпе юри кукăртса çырнисене, биографине вара шурă çарта пулни-пулманнипе çыхăнтарса суйнине халĕ те сирсе пĕтереймен-ха. Мĕтри Юман тутарсен идеологĕпе Султан Галеевпа, пушкăртсен ертӳçипе Тоган Валидипе Атăл–Урал патшалăхне тăвас ыйтупа тавлашнисене, Григорий Аронштам, Семен Диманштейн историксене Элтешлĕх вăрçин* историне çырма пулăшнине тата чăваш тĕпчевçин пысăк пĕлтерĕшлĕ ытти нумай ĕçне вара пачах та хускатман. Тĕрĕссипе, Юманăн çырăвĕсемпе Писательсен союзĕнче тухса каланисене, урлă-пирлĕ таптаса пынинчен хӳтĕленсе çырнисене тимлĕ тĕпченĕ статья та тухман-ха. Çав хаклă çырусене шырама хăраса ларнă пулсан, вĕсем çут тĕнчене тухмасăрах пĕтетчĕç. 1975 çултах пичете сĕннĕ, анчах çутта кăлармасăр арестленĕ тĕпчеврен сăвăрса ларакан "шултра ученăйсенчен" çĕнĕ документсем тупасса, Юман пирки çĕнĕ тĕпчев сăмахне каласса кĕтетĕп.

Хамăр чăвашсемех кĕвĕçсе те ухмахланса Мĕтри Юмана çур ĕмĕр таптаса пурăннă хыççăн, 1997 çулта "Мĕтри Юман: суйласа илнисем" кĕнеке пичетленсе тухсан тин вăл чăн тивĕçĕпе историе, энциклопедисене, вĕренӳ кĕнекисене кĕрсе вырнаçрĕ. Малтан ун çинчен элек сарнисемех, тĕрĕссине пĕле тăркачах пĕр тĕрĕс сăмах та калама хăяйманнисемех кайран "чăнлăх паттăрĕсем" пек курăнма тăрăшрĕç. Халăхăмăр тӳрĕ чунлă та çирĕп тетпĕр те, анчах ним тума та çук – чăваш ĕçĕн ертӳлĕхĕсенче, тĕпчевçисемпе çыравçисен картинче икĕ е виçĕ питленсе, кашкăр чунĕсем çине пыл шерпечĕ сĕрсе пурăнакансем паян кун та ытлашшипех-ха.

Вĕсен суя чап илнĕ, анчах вараланчăк ячĕсене паттăр та чыслă çыравçăпа пĕрле çырса таса Асăма пăтратассăм та килмест. Пĕлетĕп: истори хăрах енлĕ

**Элтешлĕх вăрçи – Граждан вăрçи*

сăмахран тăмасть. Вăл ачалла айкашнă Ютпа Тукай, çатăлти Тимĕрçĕ, тӳрешке Хутарпа тăрпалтай Кăтрашка тĕпчевçĕ, икĕпит Ишуçкипе çăткăн Ёртиван, намăса пĕлмен Кайăк çырнисенчен кăна хывăнмасть. Тĕнчере тĕрĕссине пĕлес текенсем те пур. Тĕслĕх вырăнне Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн çирĕплĕхне илетĕп. Тĕрĕслĕхшĕн тăракансене пурнăçра чăн пулнине истори пурпĕрех уçса кăтартать. Пытарнă е путарнă кирек мĕнле вăрттăнлăха та тĕнче пурпĕр пĕлетех!

Мĕтри Юман чăваш историйĕнче хăйĕн тĕп вырăнне тупрĕ. Истори тĕпчевĕсенчен хальтерех тухнă "Национальное самоопределение чувашского народа в начале XX века: идеологический аспект" тĕпчевре (Шупашкар, Çĕнĕ вăхăт, 2013) Сергей Щербаков ăсчах, историçĕсен унччен тĕтрине сирсе, Юман, Алюнов, Эльмен, Милли, Гаврилова тата ытти паттăрсем çинчен чăнлавсемпе çирĕплетнĕ сăмахне каларĕ. Алексей Леонтьев журналист "Хыпар" хаçатăн тулли историне çутатакан кĕнекинче Юман вăхăтĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăрăва тĕрĕс хак парса хăварчĕ. Шырав вĕçленмен-ха. Халиччен пĕлмен е пытарса усранă документсем тупăнсах пырăççĕ. Юманăн вырăсла çырнă ĕçĕсене пухса тепĕр кĕнеке кăлармалла, тахçан тухнă кĕнекисене пухса кăларсан та усă пулĕччĕ. Юман ывăлĕн Роман Петровăн архивĕпе кăсăклансан та çĕнĕ чăнлавсем тупăннă пулĕччĕç. Тĕрĕссипе, чăваш халăхĕн хăй ĕмĕрĕнчен чылай маларах пынă ăслă шухăшлавçин философине ăнкарма çеç тытăнатпăр.

Большевиксен тоталитаризмĕ пĕтнĕ пекех демократин пăтранчăк вăхăчĕсем те иртеççех. Пĕрре те иккеленместĕп – вара хамăрăн кĕрешӳ паттăрĕсене чыслакан "Чăваш халăх историйĕ" тĕпчевĕн тулли те тĕрĕс кĕнеки çырăнса тухатех. Мĕтри Юман сăнĕ Петр Егоровпа Никита Бичурин, Çĕпритун Янтушпа Константин Иванов, Иван Яковлевпа Николай Никольский, Василий Чапаевпа Андриян Николаев, Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ, Степан Максимовпа Герман Лебедев сăнĕсемпе пĕр ретре курăнса тăма тивĕç. Чăваш халăхĕшĕн пынă кĕрешӳре XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Чĕрĕлӳре Юманпа тан тăрса кĕрешнĕ шухăшлавçăсем сахал – Гавриил Алюнов, Тимахви Хурипе Агафия Гаврилова, Алексей Милли, Данил Эльмен, Çеçпĕл Мишши тата кам?

**Виталий СТАНЬЯЛ**